Район кунĕ ячĕпе сире!

Çĕнтеруҫ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

18 (7443) № ✻ Эрне кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 2-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ӳсĕмлĕ ĕçлеме пултаратпăр

Ю.А. Иванов, район пуçлăхĕ

Районти ял хуçалăх ĕçченĕсем иртнĕ çул та республикăра çĕнсе илнĕ ырă ята çĕре ӳкермерĕç. Тырă туса илессипе пирĕн район республикăра 2-мĕш вырăн йышăнать, çĕр улми туса илессипе – 3-мĕш вырăн. Выльăх-чĕрлĕх продукцине туса илессипе те эпир – малти вырăнсенче. Сĕт туса илессипе – 1-мĕш вырăнта, аш-какайпа – 2-мĕш вырăнта.

Пысăк тата вăтам предприятисем ял хуçалăх продукцине туса илнин индексĕ 101,5 процентпа танлашать. 2005 çулта ку кăтарту 96,6 процент пулнăччĕ. Пĕтĕм категориллĕ хуçалăхсем 2006 çулта ял хуçалăх продукцине пĕтĕмпе 1156,6 миллион тенкĕлĕх туса илнĕ. Вăл шутра ял хуçалăх предприятийĕсен тӳпи - 39 процент, ытти – килти хушма хуçалăхсен ĕçĕ.

2006 çулта ампар виçипе 25,8 пин тонна тырă туса илтĕмĕр. Вăтам тухăç 17 центнерпа танлашрĕ. Çав вăхăтрах "Волга", "Восток", "Ударник" хуçалăхсеннче вăл 25 - 24 центнер ытла пулчĕ.

Иртнĕ çул çĕр улми туса илессипе те кăтартăва 4 процент ӳстертĕмĕр. Районта "иккĕмĕш çăкăра" вăтамран кашни гектартан 153 центнер илтĕмĕр пулсан, "Оринино" хуçалăхра тухăç 208, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 202, "Ударник" хуçалăхра 184, "Свобода" хуçалăхра 182 центнертан та иртрĕ.

Ял хуçалăх производствин пĕтĕмĕшле калăпăшĕнче выльăх-чĕрлĕх отраслĕн тӳпи 69 процент чухлĕ. Пĕтĕмĕшле сĕт сăвасси 2 процент чухлĕ сахалланчĕ пулин те, пĕр ĕне пуçне сĕт сăвасси виçĕм çулхинчен вăтамран 6 процент чухлĕ ӳсрĕ, 3716 килогрампа танлашрĕ.

Ытти регионсенсен опытне тĕпе хурса Ильич ячĕпе, Суворов ячĕпе, Чкалов ячĕпе хисепленекен, "Волга" хуçалăхсем çĕнĕ технологи çине куçас çул çине тăчĕç. "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики те çулсерен производствăна ӳстернине палăртмасăр иртме çук. Кунта пĕлтĕр чăх пуçне çăмарта илессипе рекордлă шая тухрĕç: çăмарта тăвакан кашни чăхран 314 çăмарта илме пултарчĕç.

Ĕçри ăнăçу кашни çын хăйĕн ĕç вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа вăй хунинчен нумай килет. Çавăнпа та çак тăрăшуллă ĕçченсене ятранах асăнма кăмăллă. Вĕсем: Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Александр Матвеевич Григорьев, "Свобода" хуçалăхри Николай Петрович Максимов, Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Болеслав Николаевич Никитин механизаторсем, "Ударник" хуçалăхри Александр Ермогенович Анисимов водитель, "Свобода" хуçалăхри Валерий Александрович Соловьев комбайнер, "Свобода" хуçалăхри Елена Алексеевна Кирилловапа "Ударник" хуçалăхри Зоя Степановна Андреева дояркăсем, "Лидер" агрофирмăри Лидия Николаевна Воронцова сысна самăртакан, "Оринино" хуçалăхри мăйракаллă шултра выльăх самăртакан Светлана Васильевна Вершкова оператор, "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикинче чăх-чĕп пăхакан Альбина Николаевна Столярова, "Свобода" хуçалăхри Августина Кирилловна Нодыкова конюх, "Герой" хуçалăхри сурăх пăхакан Светлана Алексеевна Иванова, Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Владимир Лукич Иванов утарçă.

Иртнĕ çул 4 наци проекчĕ пурнăçа кĕнипе те асра юлчĕ. "Агропромышленность комплексне аталантарасси" приоритетлă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн агропромышленность комплексĕнчи 9 хуçалăх 28 миллион тенкĕлĕх, виçĕ хресчен (фермер) хуçалăхĕ 4,2 миллион тенкĕлĕх тата 835 килти хушма хуçалăх 123 миллион тенкĕлĕх çăмăллатнă кредитсем илчĕç.Паянхи куна районти 12 хуçалăх сысна ĕрчетессине тата сĕт производствине аталантарассине малалла яма 129 миллион тенкĕлĕх инвестици проекчĕсем хатĕрлерĕ.

Килти хушма хуçалăхсене эффективлă аталантаракансене те паян ятранах асăнас килет. Кунта Рыккакассинчи Галина Николаевна Малинова, Мăн Шашкарти Марина Николаевна Мерлова, Сентимĕрти Тамара Ионовна Максимова, Турайĕнчи Михаил Илларионович Иванов, Отаркăри Иван Степанович Демидов, Чуманкассинчи Вячеслав Иванович Вязов, Муркашри Алексей Юрьевич Кольков, Катькассинчи Галина Михайловна Колесникова, Çĕньял Хуракассинчи Ефросинья Мироновна Цветкова ытгисемшĕн тĕслĕх

пулса тăраççĕ. Ильинка ял тăрăхĕнчи Мăн Шашкарта пурăнакан Галина Геннадьевна Волкован килти хушма хуçалăхĕ "Раççей Федерацийĕнчи килти чи лайăх хушма хуçалăх" ята çĕнсе илчĕ, Раççейри чи лайăх 100 хушма хуçалăх йышне кĕнине палăртма кăмăллă.

Асăннă наци проекчĕ ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелеме те пĕтĕм условисене туса пачĕ. Районта хальлĕхе 10 кооператив йĕркеленчĕ, 3-шĕ аккредитаци витĕр тухрĕç ĕнтĕ.

Промышленноçра та пĕлтĕр виçĕм çулхинчен ăнăçлăрах ĕçлерĕмĕр. Туса кăларнă таварсен, харпăр хăйĕн вăйăсемпе пурнăçланă ĕçсемпе услугăсен калăпăшĕн индексĕ иртнĕ çул 145,6 процентпа танлашрĕ е паянхи хаксемпе 491,1 миллион тенкĕлĕх. Уйрăмах "Сеспель" акционерсен хупă обществи ăнăçлă ĕçленне палăртмалла. Асăннă предприяти продукци туса кăларассине иртнĕ çул 1,6 хут ӳстерчĕ. Çавăн пекех "Моргауши-межрайгаз" филиала, "Муркашри издательство çуртне", "Вита" чикĕллĕ яваплăхлă обществăна ырăпа асăнмалла. Вĕсенче пĕлтĕр кăтарту 163 – 123 процентпа танлашрĕ.

Строительство ĕçĕсем те иртнĕ çул ăнăçлă пычĕç. 2006 çулта ĕçе кĕртнĕ пурăнмалли çуртсен пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 26,9 пин тăваткал метрпа танлашать. Пĕлтĕр Мăн Сĕнтĕрти вĕрентӳпе культура центрне реконструкцилес ĕç вĕçленчĕ, Вомпăкассинче харăсах клуб, библиотека, фельдшерпа акушер пункчĕ хута кайрĕ. Кунпа пĕрлех 10,4 километр тăршшĕ автомобиль çулĕсене тунă тата юсанă. 2 çул хушшинче пĕтĕмпе районти 30 ял патне пĕтĕмпе 40,4 км çул тума палăртнă.

Паян уйрăмах хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацине, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхсене ырăпа асăнмалла.

2006 çулта инвестицисен калăпăшĕ 2005 çулхинчен 27 процент чухлĕ ытларах пулчĕ: 353,3 миллион тенкĕлĕх. Пĕлтĕр социаллă ипотека кредит программипе 5 çемье 800 пин тенкĕлĕх кредит илчĕ, 22 çамрăк çемье 1 миллион та 486,8 пин тенкĕлĕх каялла тавăрса памалла мар субсидисене тивĕçрĕ. "Ялсене 2010 çулччен социаллă аталантарасси" республикăри тĕллевлĕ программăпа 22 çамрăк çемье пурăнмалли çурт-йĕр тума 2 миллион та 946 пин тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвне илчĕ. Республика бюджетĕнчен каялла тавăрса памалла мар субсидине 29 çемье 2 миллион та 601,7 пин тенкĕ илчĕ, çапла майпа хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатрĕ. Иртнĕ çул "Раççей гражданĕсене – меллĕ тата хăтлă çурт-йĕр" наци проекчĕ пурнăçа кĕме пуçлани районта пурăнакансен çурт-йĕр ыйтăвне татах та лайăхлатма май парать.

Суту-илӳ сферипе районта ăнăçлă аталанса пырать. 2006 çулта ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ 545,3 миллион тенкĕпе танлашрĕ. Ку вăл виçĕм çулхинчен 25 процент чухлĕ пысăкрах. Çак кăтартун 60 процентне Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсем турĕç. Суту-илӳ предприятийĕсем "Агропромышленность комплексне аталантарасси" наци проектне пурнăçлассине те хастар хутшăнаççĕ. Вĕсем ял хуçалăх продукчĕсене туянас, тирпейлес тата сутас ĕçе палăрмаллах лайăхлатса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе ĕç калăпăшне 10 процент ӳстерсе 26,4 миллион тенкĕпе танлаштарчĕç.

Çулсеренех Мăн Сĕнтĕрпе Муркаш райповĕсем Чăвашпотребсоюз системинче çеç мар, Раççей Федерацийĕн Центросоюз шайĕнче те ырăпа палăрса тăраççĕ. Эпир хăйсен ĕçĕнчи ăстасемпе чăннипех мухтанма пултаратпăр.

Тӳлевлĕ пулăшусем парассипе те пĕлтĕр унчченхи çулхинчен 18 процент чухлĕ ăнăçлăрах ĕçленĕ. Кăтарту 119,4 миллион тенкĕпе танлашрĕ. Çакăнта пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен, газ хуçалăхĕн, çыхăну ĕçченĕсен тӳпи пысăк.

Чăваш Республикинчи федераллă почта çыхăнăвĕн управленийĕн Муркашри почтамчĕ тĕрлĕ пулăшусем парасси 124 процентпа танлашрĕ. Ярапайкасси тата Çатракасси уйрăмĕсем ку тĕлĕшпе уйрăмах лайăх ĕçленине палăртмалла.

Район аталанăвĕ экономика ӳсĕмĕсенче çеç мар, вĕрентӳ, медицина, культура тĕлĕшĕнчи, социаллă ыйтусем пурнăçа кĕнинче те курăнать. Иртнĕ çул 131-мĕш федераллă саккун пурнăçа кĕнипе те палăрса юлчĕ. Çав вăхăтрах вăл ял тăрăхĕсенче ĕçлекенсем хăйсем çине тиеннĕ йывăрлăхсене халăхпа пĕрле татса пама пултарнине те кăтарса пачĕ.

Район пуласлăхĕ - çамрăксенче. Апла пулсан ачасене пахалăхлă пĕлӳ парасси тата вĕсен ăс-хакăлне ӳстересси вĕрентекенсенчен те нумай килет. "Вĕрентӳ" наци проекчĕ вара çакна валли пĕтĕм çула уçса пачĕ. Çулсеренех вĕрентекенсем хăйсен пĕлĕвне ӳстереççĕ, ĕçре çĕнĕ меслетсемпе усă кураççĕ. 2006 çул вĕçленнĕ тĕле районти шкулсен 66 процентĕнче хăйсен сайчĕсене туса хучĕç. Çĕнĕ меслетсемпе ĕçлекен вĕрентӳ учрежденийĕсен конкурсĕнче Муркашри лицей Раççей Федерацийĕн Президенчĕн грантне - пĕр миллион тенкĕне тивĕçрĕ. Калайкассинчи вăтам шкул ЧР Президенчĕн 200 пин тенкĕлĕх грантне илчĕ. Нискасси, Çатракасси, Сосновка шкулĕсем район администрацийĕн 20 пин тенкĕлĕх грантне тивĕçрĕç.

Наци проекчĕн приоритетлă енĕсенчен пĕри - пултаруллă вĕрентекенсене пулăшасси. Турайри вăтам шкулти технологи учителĕ Альбина Юрьевна Герасимова, Москакассинчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Светлана Федоровна Желтова, Калайкассинчи вăтам шкулти физкультура учителĕ Виталий Тимофеевич Моисеев РФ Президенчĕн грантне, Муркаш шкулĕнчи пуçламăш классене вĕрентекен Валентина Владимировна Смирнова ЧР Президенчĕн грантне тивĕçрĕç. Тепĕр 20 учитель район администрацийĕн пуçлăхĕн грантне илчĕç.

Районта ирттернĕ "2006 çулхи чи лайăх класс ертӳçи" конкурса Муркашри вăтам шкулти 7-мĕш класс ертӳçи Надежда Валериановна Толстова çĕнтерчĕ.

2007 çул – Ача çулталăкĕ. Çавна май кашни ача хăйне телейлĕ туйтăр тесе пирĕн кашнинех хамăртан килнине йăлт тумалла. Халĕ, акă, "Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе" ыр кăмăллăх марафонĕ пырать. Унта та хиселлĕ ентешĕмĕрсем кашниех хастар хутшăнасса шанас килет.

Граждансен сывлăхне тивĕçлĕ шайра тытасси тата çемьесене, ачалăха упрасси – район администрацийĕн тĕп задачисенчен пĕри. "Сывлăх" наци проекчĕ районти халăха медицина пулăшăвне парассин шайне палăрмаллах ӳстерме пулăшрĕ. Асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн медицина ĕçченĕсен ĕç укçине хăпартни вĕсен яваплăхне татах та ӳстерет. Çавăн пекех çак наци проекчĕпе килĕшӳллĕн амбулаторипе поликлиника звенинчи медицина ĕçченĕсене хатĕрлеме, сывлăх хуралçисен пĕлĕвне ӳстерме май парать. Ача çуратакан хĕрарăмсене сертификатсемпе тивĕçтерни те медицина пулăшăвĕн пахалăхĕ çине тӳрремĕнех витĕм кӳрет. Иртнĕ çул çавăнпа пĕрлех амбулаторипе поликлиника учрежденийĕсем диагностика оборудованийĕсемпе пуянланчĕç. "Сывлăх" наци проекчĕ ĕçлекен граждансене хушма диспансеризаци витĕр кăларма, ВИЧ-инфекципе, В тата С гепатитпа кĕрешме майсем туса пачĕ. Çавăн пекех васкавлă медицина пулăшăвĕн автомобиль паркне çĕнетрĕмĕр.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).

Республикăра

Министрсен Кабинечĕн ларăвĕ

Николай Федоров Президент ертсе пынипе февралĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Правительство членĕсем Чăваш Республикин экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн 2006 çулхи тĕп кăтартăвĕсене, 2007 çулхи тĕллевсене пăхса тухнă. Ку ыйтусемпе И.Б. Моторинпа Н.В. Смирнов министрсен доклачĕсене сӳтсе явнă.

Л. АЛЕКСЕЕВ.

Йышăну

Спартакиада итогĕсене пĕтĕмлетнĕ

Февралĕн 20-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ 63 № йышăну кăларнă. Унта ял хуçалăх предприятийĕсенчи, организацисенчи тата учрежденисенчи физкультура коллективĕсен иртнĕ çулхи ĕç сыннисен спартакиадин итогĕсем пирки сăмах пырать. 2006 çул итогĕсемпе **1-мĕш вырăна «Моргаушрайбыт»** чикĕллĕ яваплăхлă общество тухнă тесе йышăннă, ăна 7000 тенкĕ преми пама палăртнă. **2-мĕш вырăнта «Оринино»** хуçалăх (5000 тенкĕ), **3-мĕш вырăнта Ильич яч. хис.** хуçалăх (3000 тенкĕ).

Анлă канашлу

Иртнĕ çул итогĕсене хак панă

Февралĕн 28-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче районĕн пурнăçпа экономика аталанăвĕн иртнĕ çулхи итогĕсемпе анлă канашлу иртнĕ. Унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, районти предприятисемпе организацисен ертӳçисемпе тĕп специалисчĕсем, район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен ертӳçисем хутшăннă.

Канашлура «Районăн 2006 çулхи производствăпа экономика ĕçĕ-хĕлĕн, социаллă аталанăвĕн итогĕсем çинчен» район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш сумĕ, ял хуçалăхпе апат-çимĕç управленийĕн пуçлăхĕ А.Н. Иванов доклад туса панă.

Доклада сӳтсе явма «Оринино» хуçалăх ертӳçи Ю.Н. Шишокин, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Н.Г. Ванеркин, Чапаев яч. хис. хуçалăх ертӳçи В.П. Морозов, старейшинăсен районти канашĕн членĕ В.С. Краснов, хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн ертӳçи В.В. Коротников, Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.В. Ермаков хутшăннă. Канашлура пĕр-пĕрин ĕç опытне тишкернĕ, малашне усĕмлĕрех ĕçлемелли çулйĕрсене палăртнă.

Район кунне халалласа

63 çул тултарчĕ район

Февралĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районне йĕркеленĕренпе 63 çул тултарчĕ. Çавна май паян Шупашкарта К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрĕнче ирттерме пысăк уяв программи палăртнă. Савăнăçлă пухура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов районăн 2006 çулхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетет, 2007 çулхи задачăсене уçăмлатать.

Пухăва хуçалăхсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, тĕрлĕ отрасльсенче вăй хуракан пултаруллă та хастар ĕçченсем, хăнасем йышлă хутшăнаççĕ. Вĕсене те сăмах парĕç. Кунпа пĕрлех ĕçре палăрнисене чысласси-саламласси те кун йĕркинче. Районти тĕрлĕрен пултарулăх ушкăнĕсем уявра хăйсен юрри-ташшипе савăнтарĕç. Çавăн пекех нумай стендсемпе выставкăсем йĕркелеме, район пурнăçне халаллана видеофильм кăтартма пăхнă.

Пĕр сăмахпа, хаваслă та илĕртӳллĕ пулĕ район уявĕнче.

Юбилей

Саламлатпăр

Юратнă хаклă мăшăра, аннене, асаннене, кукамая, хунямана, тăхлачăна, çывăх тăванăмăра Турай ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Калерия Германовна ИВАНОВАНА** 65 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Юратнă çыннăмăр, эсĕ нумай çул хушши Турай участок больницинче медсестра пулса тăрăшрăн. Халĕ ĕнтĕ тивĕçлĕ канура. Эсĕ хăвăн тивĕçусене яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçларăн. Çемье ăшшине тытса тăрассишĕн, ачусене пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн ырми-канми тăрăшрăн. Санăн ырă кăмăлу, çепĕç чуну кашнин валлиех çитет. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр. Хаклă çыннăмăр, нумай çулсем пурăн, яланах савăк кăмăллă пул. Сана юбилей ячĕпе саламласа канлĕ ватлăх сунатпăр. Ачусен, мăнуксен ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем.